

Анисим Асламас Етĕрне районĕнчи Вăрманкас Асламасра 1924 çулхи июлĕн 24-мĕшĕнче çуралнă. Шкул хыççăн Чăваш музыка училищин хатĕрлев курсне вĕренме кĕнĕ. Çакăнта пĕрремĕш хут рояль курнă, асамлă япала пек туйăннă вăл ăна.

Анисим Васильев хăйĕн пултарулăхĕпе танташĕсене те, вĕрентекенсене те тĕлĕнтернĕ. Пĕрремĕш юррине вăл вунпиллĕкре çырнă, кайран, чĕрĕк ĕмĕртен, унпа оперăра усă курнă.

Çамрăк композиторăн пĕр вăхăт хушши юратнă ĕçĕнчен уйрăлма тивет: юнлă вăрçă хирĕнче сапăçать хаяр тăшманпа. Пăшалпа та, юрă-кĕвĕпе те...

Мĕнпе илĕртеççĕ-ха пире Анисим Асламас юрри-кĕввисем? Авторĕ халăх пултарулăхне ăста пĕлет, ăна вăл çине тăрсах вĕреннĕ. Унăн «Çеçпĕл», «Айтар», «Салампи» оперисене, «Нарспипе Сетнер» опера-балетне пур çĕрте те хапăл туса йышăнаççĕ.

Анисим Васильевич 60 çул тултарчĕ: пултарулăх тата вăйлăрах аталаннă вăхăт ку. Композитор тăван халăхăмăра çĕнĕ произведенисемпе савăнтарас кăмăллă. Анăçу сунатпăр ăна!

Фотоÿкерчĕк çинче: А. В. Асламас Киеври консерваторире вĕреннĕ чухне (1945 ç.).

30353-ж

# Мир уявĕ

*Кĕвви А. АСЛАМАСĂН.*
*Сăвви П. АФАНАСЬЕВĂН*




1\. Тÿпе йăлтăр таса,
Сывлăш уçă ытла!
Кĕрлесе, янраса
Вăранать ял-хула.

Кашнин сăн-питĕнче
Çутă савнăç куран.
Епле хÿхĕм тĕнче —
Мир уявĕ паян.

*Хушса юрламалли:*

Лăпкă тăтăр тĕнче,
Вут ан тухтăр нихçан! —
Çĕр-планета çинче
Мир уявĕ паян.

2\. Заводра, стройкăра —
Хĕвел пек ялавсем.
Аслă ăмăртура
Хĕмленеççĕ вĕсем.

Çĕнтерÿ паллисем
Курăнаççĕ тăстан,
Ывăнми паттăрсен
Ĕç уявĕ паян.

*Хушса юрламалли.*

3\. Çут хĕвел шевлинче —
Хăмачсем, хăюсем...
Кур, кашнин аллинче
Чĕнÿсем, йыхравсем.

Ян! янра, пирĕн сас,
Пул сулмаклă, хивре.
Тĕнче тăтăр хавас,
Тĕнче тăтăр хитре.

*Хушса юрламалли.*